26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
13
ВЫРСАРНИКУН
31(6526) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАСАЧӖ

ССР Союзӗн Совнаркомӗнче

Тракторсене юсамалли плана 1944 ҫулхи январь уйӑхӗнче мӗнле тултарнин итогӗсене пӑхса тухса, ССР Союзӗн Совнаркомӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. МТС-семпе совхозсен тракторӗсене 1944 ҫулхи январь уйӑхӗнче юсамалли плана лайӑххӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата тракторсене юсас ӗҫре уйрӑмӑнах палӑрнӑ работниксене премилеме 300.000 тенкӗ укҫан премине ҫаксене парас: Грузи ССР-не, Краснодар крайне, Новосибирск облаҫне, Ворошиловград облаҫне, Мускав облаҫне.

2. 1944 ҫулхи январь уйӑхӗнче тракторсене юсамалли плана ҫак республикӑсем, крайсем тата облаҫсем ытлашшипех пурнӑҫа кӗртнине палӑртас: Украина ССР-ӗ, Казах ССР-ӗ, Узбек ССР-ӗ, Киргиз ССР-ӗ, Туркмен ССР-ӗ, Таджик ССР-ӗ, Азербайджан ССР-ӗ, Армян ССР-ӗ, Ставрополь, Алтай, Приморски тата Хабаровск крайӗсем, Архангельск, Челябинск, Чкаловск, Свердловск, Молотов, Орел, Горький, Ярославль, Тула, Калинин, Иваново, Иркутск, Чита, Кемерово, Курган, Киров, Ленинград, Вологда, Курск, Саратов, Тамбов тата Воронеж облаҫӗсем, Тутар, Башкир, Удмурт, Бурят-Монгол, Якут, Коми, Чӑваш тата Дагестан АССР-ӗсем.

СССР орденӗсемпе медалӗсене пани

Февралӗн 12-мӗшӗнче Советсен Ҫуртӗнче пӗр завода Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ пачӗҫ.

Награда парас умӗн СССР Верховный Совечӗн депутачӗ ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ И. М. Чарыков юлташ кӗске сӑмах тухса каларӗ.

—Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод, — тет вӑл, — фронт заказӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑшӑн, ҫар электротехникин ҫӗнӗ тӗслӗхӗсене туса кӑларас ӗҫе вӗренсе ҫитсе, вӗсене серипе туса кӑларнӑшӑн тата правительствӑн специальнӑй заданийӗсене пурнӑҫланӑшӑн Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Ку пысӑкран та пысӑк награда — завод коллективӗн мухтавлӑ тивӗҫӗ. Завод ҫитӗнӗвӗсемпе чӑваш халӑхӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм ССР Союзӗн халӑхӗ савӑнать. Сире, тылри гвардеецсене, татах пысӑк ҫитӗнӳсем тума сӗнетӗп, — тет Чарыков юлташ. Унтан вӑл завод директорне Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ пачӗ.

Завод директорӗ, Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ илсе, партипе правительствӑна ҫав пысӑк наградӑшӑн хӗрӳллӗн тав турӗ, завод коллективӗ ячӗпе малашне тата вӑйлӑрах ӗҫлесе, Хӗрлӗ Ҫара тата ытларах пулӑшма сӑмах пачӗ.

Унтан СССР Верховный Совечӗн депутачӗ—Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ З.А. Андреева юлташ наградӑланӑ ҫынсене орденсемпе медальсем пачӗ.

Я. С. Бенский юлташ Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ илнӗ ятпа ҫапла каларӗ:

— Мана коммунистсен партийӗ вӗрентсе ӳстерчӗ, ҫавӑнпа та пысӑк наградӑшӑн эпӗ чи малтан ӑна тав тӑватӑп. Правительствӑна ҫак пысӑк наградӑшӑн тивӗҫлӗ пулас тесе, эпӗ хамӑн мӗнпур вӑйпа пӗлӗве хурса ӗҫлӗп.

Орден илнӗ ятпа М. Л. Брикер, Л. З. Бунин, А. И. Якунин тата ыттисем те ответлӑ сӑмахсем тухса каларӗҫ.

—Ҫак пысӑк награда мана,— тет Якунин юлташ, — татах та патварлӑрах ӗҫлеме хушать. Эпӗ хамӑн мӗнпур пек вӑй-хала тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫе паратӑп. Манӑн ӗҫе ҫакӑн пек чысланӑшӑн партипе правительствӑна чӗререн тав тӑватӑп.

«Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медаль илнӗ ятпа чӑваш хӗрӗ З. М. Данилова юлташ чӗререн савӑнса ҫапла каларӗ:

— Эпӗ Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансан, ҫак завода ӗҫлеме кӗтӗм. Халӗ эпӗ хамӑн ӗҫе тӗплӗн вӗренсе ҫитрӗм. Манӑн кӗтнӗ ӗмӗт ҫитрӗ. Малашне эпӗ татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулатӑп,—тет вӑл.

Орденсемпе медальсем панӑ хыҫҫӑн З.А. Андреева юлташ кӗске сӑмах тухса каларӗ. Вӑл награда илнӗ юлташсене саламларӗ тата ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сунчӗ.

Шӑхасан МТС-ӗ тракторсем юсамалли плана пурнӑҫланӑ

ШАХАСАН. Февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне тракторсене юсас ӗҫе вӗҫлерӗмӗр. Пурӗ 45 трактор юсарӑмӑр, вӗсенчен 30 тракторне тӗпрен юсанӑ, 15-шне—текущи ремонт тунӑ.

Халӗ комбайнсемпе молотилкӑсене юсатпӑр.

Шӑхасан МТС-ӗн директорӗ **КОНСТАНТИНОВ**,
Старши механик **СЕВЕРОВ**.
Парторганизаци секретарӗ **ТИМОФЕЕВ**.

Шӑхасан, МТС директорне КОНСТАНТИНОВ юлташа
Старши механик СЕВЕРЕВ юлташа
Парторганизаци секретарне ТИМОФЕЕВ юлташа

ВКП(б) Обкомӗ Сире тата МТС-ӗн пӗтӗм коллективне тракторсене срокчен юсаса пӗтерне ятпа ыра сунса саламлать. Трактористсем тата МТС-ри мӗнпур работниксем тракторсене юсанӑ ҫӗрте хастарлӑн ӗҫлени Сирӗн МТС, ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртмелле тӑвасси тата ӑмӑртури малти вырӑна хӑйӗн аллинче ҫирӗппӗн тытса тӑрасси ҫине шанса тӑма май парать.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн Секретарӗ **И. ЧАРЫКОВ**.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, республикӑри вырӑнти промышленность предприятийӗсен тата промысла кооперацин артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи январь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ҫапла йышӑннӑ:

Вырӑнти промышленность предприятийӗсем енӗпе

Совнарком ӑмӑртура Тӑвай районӗнчи промкомбинат (управляющийӗ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Широв юлташ) мала тухнӑ, тесе йышӑннӑ.

Тӑвай районӗнчи промкомбинат январь уйӑхӗнче плана пӗтӗм продукци енӗпе 143,5 процент, куллен кирлӗ таварсем енӗпе 228 процент тултарнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Ишлей районӗнчи промкомбинатран илсе, Тӑвай районӗнчи промкомбината памалла тунӑ. Ӑмӑртура уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме ӑна 15 пин тенкӗ укҫа памалла тунӑ.

Канашри горпромкомбината 10 пин тенкӗ, Сӗнтӗр районӗнчи промкомбината 5 пин тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

Промысла кооперацийӗн артелӗсем енӗпе

Октябрьски районри Караньялӗнчи «Труд» артель (правлени председателӗ Мокеев юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Херсонов юлташ), январь уйӑхӗнче плана пӗтӗм продукци енӗпе 141,1 процент, куллен кирлӗ таварсем енӗпе 158,8 процент пурнӑҫланӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне унӑн аллинчех хӑварма тата ӑмӑртура уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 15 пин тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ.

Чӑвашшвейпромсоюз системине кӗрекен Улатӑрти «Красная швея» артеле 10 пин тенкӗ, Шупашкарти Чӑвашпромсоюз системине кӗрекен «Металлист» артеле 5 пин тенкӗ, Шупашкар районӗнчи Ҫӗньял Уйкасри артеле 5 пин тенкӗ укҫа памалла тунӑ.

3-4-шар норма

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод коллективӗ Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ куна ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса ӗҫлет. Забиякин, Жебрак юлташсем начальник пулса ӗҫлекен цехсем январь уйӑхӗнчи задание те 5 кун малтан пурнӑҫларӗҫ. Дьяченко, Хижняк, Егорова, Клюканов стахановецсем ӗҫ нормине кашни кунах 300—400 процент тултараҫҫӗ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ЛУГА хули енче ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, темиҫе ял туртса илнӗ.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшмана ҫавӑрса илмелли маневр туса тата фронтран атакӑласа, февралӗн 11-мӗшӗнче ШЕПЕТОВКА хулипе пысӑк чугун ҫул узелне туртса илнӗ.

ЗВЕНИГОРОДКӐПА ШПОЛА хулисенчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкине пӗтерессишӗн ҫапӑҫнӑ, ҫавӑрса илнӗ унка хӗссе пырса, ГЛУШКИ, ЧЕРЕПИН, ОЛЬХОВЧИК, МИРОПОЛЬЕ, ПОТАШНЯ, ТАГАНЧА, ПАТОЧИНО, НОВО-ПАВЛОВКА, ПЕШКОВСКИЙ ялӗсене тата ТАГАНЧА чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах ЗВЕНИГОРОДКӐРАН хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкине пулӑшма кӑшкӑн татса кӗме хӑтланнӑ нимӗҫ пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сирсе-сирсе янӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ, артиллерипе минометсем персе тӑнӑ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем фронтӑн мӗнпур участокӗсенче нимӗҫсен 89 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 12 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН САМОЛЕТСЕМ ФИНСЕН КОТКА ЯТЛӐ ХУЛИНЕ ЙЫШЛӐН ТАПАННИ

Февралӗн 11-мӗшӗнче пирӗн самолетсен пысӑк ушкӑнӗ финсен портлӑ Котка хулине йышлӑн вӗҫсе пырса тапӑннӑ, хулари ҫар промышленность объекчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Вара пушарсем тухнӑ. Пирӗн самолетсем ҫинчи летчиксем пушарсем пуринчен те вӑйлӑрах целлюлоза завочӗн территорийӗнче, чугун ҫул станцийӗн ҫулӗсем ҫинче, шюцкор штабӗн, телеграф тата тинӗс ҫинчи хурал управленин районӗнче тухнине асӑрханӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

Пирӗн пӗр самолет ... хӑй базине таврӑнман.

* * *

Февралӗн 7-мӗшӗ ыран тенӗ чух хыҫҫӑн пирӗн каялла таврӑнман тесе ҫӗрле Хельсинки хулине тапӑннӑ пӗлтернӗ 4 бомбардировщик Совет Союзӗнчи ытти аэродромсем ҫине анса ларнӑ.

* * *

Шведсен «Стокгольмс Тиднинген» ятлӑ хаҫачӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, совет самолечӗсем февралӗн 8-мӗшӗнче Рига хули ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ пулать. Ҫапла пӗлтерни тӗрӗс мар, «Стокгольмс Тиднинген» хаҫат суять.

* * *

Луга хули енче пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, малалла куҫнӑ, темиҫе ял туртса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем хаяр ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн нимӗҫсен вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ тӗреклӗ пунктне туртса илнӗ, нимӗҫсен пехотине пӗр батальон таран пӗтерсе тӑкнӑ. 2 артиллери батарейине, 32 пулемет, винтовкӑсемпе автоматсем нумай тытса илнӗ. Тепӗр районра пирӗн подразделенисем нимӗҫсем Германие каторгӑна хӑваласа кайма хӑтланнӑ Совет граждӑнӗсене 300 ҫынна ирӗке кӑларнӑ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, Шепетовка хули патне пыракан ҫулсем ҫине тухнӑ. Нимӗҫсем хӑйсен вӑйӗсем тем чухлӗ пӗтнине пӑхмасӑр, вӗсем ҫав пысӑк чугун ҫул узелӗпе хӑйсен оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне тем пулсан та хӑйсен аллинчех хӑварма хӑтланнӑ. Вӗсем ҫывӑхри пур ялсене те вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ те питӗ хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Пирӗн пехотинецсемпе танкистсем ҫавӑрса илмелли маневр тунӑ та тӑшманӑн каялла чакмалли ҫулӗсене татнӑ. Пирӗн ытти чаҫсем нимӗҫсене фронтран атакӑланӑ. Хула урамӗсенче вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем паян тӑшман гарнизонне пӗтӗмпех аркатса тӑкнӑ та Шепетовка хулине йышӑннӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ тата тыткӑна та нумай илнӗ.

* * *

Звенигородкӑпа Шпола хулисенчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкине пӗтересшӗн ҫапӑҫнӑ. Ӗнер нимӗҫсенчен Завадовка ятлӑ тӗреклетнӗ пункта туртса илнӗ пирӗн чаҫсем паян тӑшманӑн пӗр пин салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ тата тыткӑна нумай илнӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Вӑл шутра—123 тупӑ, 35 миномет, 10 бронемашина, 970 автомашина, 6 ҫар пурлӑхӗн склачӗ. Ҫавӑрса илнӗ унка хӗссе пырса, пирӗн ҫарсем паян чылай ял тата Таганча чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Пӗр чаҫри боецсем, гитлеровецсене Глушки ялӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ та 9 юсавлӑ танк, 27 тупӑ тата 100 автомашина ытла тытса илнӗ. Тепӗр районра пирӗн ҫарсем ҫӗрле нимӗҫсен 2 батальонне ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ. Звенигородкӑран хӗвеланӑҫнерехре тӑшман хӑйӗн пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсене куҫарса пынӑ та хӑйӗн ҫавӑрса илнӗ группировкине пулӑшма хӗсӗнсе кӗрсе каясшӑн пулнӑ. Хаяр ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ. Пирӗн артиллеристсем, танкистсем тата бронебойщиксем гитлеровецсене йывӑр ҫухатусем кӳнӗ те вӗсен пур атакисене те сирсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсен персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунса кайнӑ 70 ытла танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппи выртса юлнӑ.

Пирӗн авиаци тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировки йышӑнса тӑракан района сывлӑшран хупӑрласа тӑрать. Пирӗн летчиксем кун каҫа тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ дивизисене ҫар хатӗрӗсем илсе пырса пама хӑтланнӑ 25 нимӗҫ самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Литва ССР-ӗнче кӗрешекен партизансен ушкӑнӗ Вильнюс хулине кӗрсе кайнӑ та тӑшманӑн пысӑк ҫар складне вут тивертсе янӑ. Каунас хули районӗнче кӗрешекен партизансем нимӗҫсен 4 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ, 5 склад сирпӗтсе янӑ тата чугун ҫул линине чылай тӗлте пӑснӑ. Совет патриочӗсем полици комендантне тата ытти темиҫе нимӗҫ офицерне вӗлернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 123-мӗш пехотнӑй дивизи штабӗн Никополь районӗнче тыткӑна лекнӗ офицерӗ капитан Макс Шенбек ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Вырӑссем наступлени пуҫласа ярсан, дивизи командирӗ мана 416-мӗш полк командирӗ пулма хушрӗ. Икӗ кун хушшинче ман полка пачах вӑйсӑрлатса хӑварчӗҫ. Вырӑс артиллерийӗнчен хӑтӑлас тесе, эпӗ хам полкӑн юлашкийӗсемпе приказ илмесӗрех каялла чакрӑм. Куншӑн мана хытӑ ятларӗҫ. Дивизи командованийӗ мана каллех кивӗ позицисем ҫине каялла тавӑрнма хушрӗ. Анчах та ӑна пурнӑҫлама кая пулчӗ. Каҫхине эпир ҫакна пӗлтӗмӗр: сылтӑм флангра тӑракан 16-мӗш мотодивизие вырӑссем аркатса тӑкнӑ, дивизи юлашкийӗсем хӑйсем йышӑнса тӑнӑ позицисене пӑрахса хӑварнӑ. Пӗр ҫӳллӗ вырӑн районӗнче салтаксемпе офицерсем нумай пухӑнса тӑнӑ. Пурте пӗр ҫӗре каплӑнса тӑнӑ та ним тума та пӗлмеҫҫӗ. Ҫӳллӗ вырӑн патне пур енчен те вырӑс танкӗсемпе автоматчикӗсем ҫывхарса пычӗҫ. Хирӗҫ тӑрасси ҫинчен нимӗн шухӑшламалли те пулмарӗ. Эпир пурте, пӗр ҫын команда панӑ пекех, алӑри хӗҫпӑшала пӑрахрӑмӑр та тыткӑна парӑнтӑмӑр.

Историне вӗрентекенсен семинарӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта вӑтам шкулсемпе педучилищӑсенче историне вӗрентекенсен семинарӗ пулса иртрӗ. Унта 60 ҫын пулчӗҫ. Вӗсем методикӑллӑ темӑсемпе докладсем итлерӗҫ.

Лекцисем вулас ӗҫе ВКП(б) Обкомӗн пропаганда енӗпе ӗҫлекен секретарӗ Иванов, ялхуҫалӑх институчӗн марксизм-ленинизм кафедрин заведующийӗ Лебедев, пединститут преподавателӗ Андреев, Кузьмин тата хулари шкулсенчи преподавательсем Ухова, Кардавальц юлташсем хутшӑнчӗҫ.

Семинарта пулнӑ историксем пӗрпӗрин опычӗпе паллашрӗҫ.

Юлашкинчен семинарта ВКП(б) Обкомӗн шкул отделӗн заведующийӗ Шалфеева юлташ пирӗн республикӑра историе вӗрентесси мӗнле пыни ҫинчен каласа пачӗ.

Семинарта Чӑваш АССР Сутӑҫ халӑх Комиссарӗ Макаров юлташ учительсемпе вӗренекенсем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: Совет Союзӗн Геройӗ, 1-мӗш степень Суворов орденӗн икӗ хут кавалерӗ — генерал-лейтенант **П. И. БАТОВ**.
(ТАСС фотохроники).

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Шупашкар хулинчи промышленность предприятийӗсенчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене наградӑласси ҫинчен

Правительство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн Шупашкар хулинчи промышленность предприятийӗсенчи ҫак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Леонид Павлович **Андревские** — цех начальникӗн заместительне.
2. Вера Матвеевна **Андреевӑна**— слесарь-сборщике.
3. Александр Тимофеевич **Анпилогова** — цех начальникӗн заместительне.
4. Михаил Кузьмич **Ардаматские** —конструкторски бюро начальникне.
5. Анна Артемьевна **Артемьевӑна** — слесаре.
6. Моисей Семенович **Аршавские** — главнӑй бухгалтера.
7. Анисия Яковлевна **Асяникӑна** — токарь-револьверщицӑна.
8. Ия Вячеславовна **Башмачниковӑна** — наладчицӑна.
9. Мария Александровна **Беловӑна** — револьверщицӑна.
10. Арон Менделевич **Бреслера**— конструкторски бюро начальникне.
11. Федор Павлович **Варенышева** — инструментальнӑй цехри мастера.
12. Илларион Ефимович **Ветрова** — группӑна ертсе пыракана.
13. Иван Савельевич **Волкенкона** — мастера.
14. Лейб Моисеевич **Воронеле** — конструкторски бюро начальникне.
15. Григорий Васильевич **Воронина** — старши мастера.
16. Яков Соломонович **Геллера** — отдел начальникне.
17. Фаня Петровна **Генкинӑна** — бригадира.
18. Никита Петрович Енчикова — ВКП(б) Шупашкар горкомӗн секретарьне.
19. Исаак Ильич **Ершова**—слесаре.
20. Валентина Сергеевна **Жолобовона** — токаре.
21. Василий Яковлевич **Журавлева** — электромонтера.
22. Вячеслав Гаврилович **Зорова** — старши мастера.
23. Зоя Ивановна **Ивановӑна** — зачистицӑна.
24. Кузьма Иванович **Иванова** — — каменщик-печника.
25. Павел Иванович **Иванова** — платнике.
26. Константин Федорович **Илющенкӑна** — старши мастера.
27. Пелагея Ивановна **Исаковӑна** — слесаре.
28. Григорий Александрович **Казакевича** — слесарь-механика.
22. Рузим Евсеевич **Каневские** — цех начальникӗн заместительне.
30. Зиновий Давидович **Каца** — хаҫат редакторне.
31. Марк Иосифович **Кацмана** — старши диспетчера.
32. Ядвига Антоновна **Клиппска** — контролера.
33. Иосиф Самойлович **Когана**— токаре.
34. Виктор Васильевич **Козлова**— старши мастера.
35. Иван Ильич **Колесникова** — цех начальникне.
36. Антонина Федоровна **Кольцовӑна** — слесаре.
37. Николай Александрович **Королева** — фрезеровщика.
38. Виталий Федорович **Коропенкӑна** — фрезеровщика.
39. Григорий Давидович **Корпилова** — электромонтера.
40. Ефим Иосифович **Котлярова**— слесарь-водопроводчика.
41. Илья Лейбович **Кравец-Залмана** — группӑна ертсе пыракана.
42. Марк Иосифович **Крочека** — цех начальникне.
43. Михаил Михайлович **Кулыгина** —конструкторски бюро начальникне.
44. Евгений Алексеевич **Кутейникова** — старши мастера.
45. Григорий Исаакович **Литвинские** — слесаре.
46. Александра Ивановна **Лупановӑна** — бухгалтер-учетчицӑна.
47. Мария Васильевна **Макаренкӑна** — слесарь сборщика.
48. Вера Клементьевна **Марковӑна** — прессовщицӑна.
49. Леф Борисович **Меднискис** — лаборатори начальникне.
50. Семен Яковлевич **Мильмана** — слесаре.
51. Файвель Лейбович **Мойсика** — ВКП(б) Шупашкар горком секретарӗн заместительне.
52. Григорий Владимирович **Мурашковские** — шофера.
53. Марк Артемьевич **Монастырные** — инженер-строителе.
54. Шейх Ходжиевич **Мухамедова** — токаре.
55. Федор Иванович **Недергина** — цех начальникне.
56. Виктор Никитич **Нерубенкӑна** — старши мастера.
57. Александра Дмитриевна **Николаевӑна** — слесарь-сборщицӑна.
58. Елизавета Петровна **Натейкинӑна** — слесаре.
59. Николай Алексеевич **Петрова** — старши мастера.
60. Георгий Афанасьевич **Петрушева** — завком председательне.
61. Гуть Шиманович **Польские** — заготовительнӑй цехсен бюро начальникне.
62. Анна Прокофьевна **Прокофьевӑна** — ОТК контролерне.
63. Ольга Максимовна **Петренкӑна** — бригадира.
64. Давид Григорьевич **Парасока** — отдел начальнике.
65. Пантелей Иванович **Палие** — старши мастера.

Юлашки ҫитес номерте пулать

Чугун çул валли—вутă

Илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн

Икĕ эрне каярах Шăхасан районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем 1944 çулăн пĕррремĕш çурçулĕнче чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана «Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле, вутă турттармалли плана—мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама обязательство илнĕччĕ. Илнĕ обязательствăна тимлĕн пурнăçлассишĕн вĕсем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, вăрман хатĕрлес ĕçре тухăçлăн ĕçлеççĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине ĕçри çитĕнӳсемпе ответлеççĕ. Юлашки кунсенче колхозниксемпе колхозницăсем ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерни палăрать. «Новая жизнь» колхоз членĕ А. Назаров юлташ вăрман каснă çĕрте задание кашни кунах 280 процентран кая мар тултарать. «Свет» колхоз членĕ А. Волкова, «Ударник» колхозран янă Д. Сергеева юлташсем те кашни кунах задание 200 процент чухлĕ пурнăçлаççĕ. Çавăн пекех вутă турттаракансем те ĕç нормине ытлашшипех тултараççĕ. Вутă турттаракан Н. Кошкин юлташ (Куйбышев ячĕпе тăракан колхозран) кулленхи задание икĕ хут ирттерсе тултарать.

«Свет», «Новая жизнь», «1-ое Мая», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлевĕн çулталăкри планне ытлашшипех пурнăçларĕç. Тĕслĕхрен, «Свет» колхозăн план тăрăх 1412 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, вăл 1947 кубометр хатĕрленĕ.

Планпа вăрмана ĕçлеме çуран 195 çын, лашапа 160 çын ямалла, халĕ тăтăшах çуран 283 çын, лашапа 270 çын ĕçлеççĕ.

Вăрман хатĕрлев ĕçне ăнăçлăн туса пырас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ сахал мар мероприятисем тунă. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитацилле-ăнлантарулла ĕçе туса пыма ВКП(б) райкомĕ хăйĕн инструкторне А. Васильев юлташа янă. Вăл колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантарулла ĕçе тивĕçлĕн туса пырать. Район руководителĕсем вăрманта ĕçлекенсем патĕнче час-часах пулаççĕ. Вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсемпе те интересленеççĕ. Ĕçре çитменлĕхсем пулсан, вĕсене çийĕнчех пĕтерессишĕн конкретлă мерăсем йышăнаççĕ.

Вăрманта комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади ĕçре пахха тĕслĕхсем кăтартать. Бригадăра 50 комсомолецсемпе çамрăксем. Вĕсем пурте ĕç нормисене икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Шăхасан районĕнчи колхоз членĕсем хăйсен обязательствине чыслăн пурнăça кĕртĕç. Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас ятпа сарăлнă ăмăртура нихăçанхинчен лайăхрах ĕçлĕç.

Н. МАТВЕЕВ,
ВКП(б) райкомăн секретарĕ.

Çур çулхи плана пурнăçланă

ВĂРНАР. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлă колхоз (председателĕ Васянин юлташ) 1944 çулăн пĕррремĕш çур çулĕнче чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана пурнăçларĕ. Январь уйăхĕнче план тăрăх 1200 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, 1320 кубометр хатĕрленĕ. Ку ĕçре С. Сатеева, А. Милицкова колхозницăсем уйрăмăнах тăрăшса ĕçлерĕç.

П. ТРОФИМОВ.

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕччен мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	75,7	78,8	1	4
Вăрнар	74,5	85,6	2	1
Шăхасан	72,5	83,0	3	3
Сĕнтĕрвăрри	67,3	85,1	4	2
Первомайски	62,8	74,2	5	6
Шупашкар	62,1	72,5	6	7
Ишлей	61,8	54,5	7	17
Канаш	58,1	69,8	8	9
Çĕмĕрле	55,5	52,3	9	19
Етĕрне	55,1	57,8	10	12
Калинино	54,3	76,7	11	5
Елчĕк	53,6	57,6	12	15
Вăрмар	52,8	71,8	13	8
Сĕнтĕр	51,2	48,2	14	25
Хĕрлĕ Чутай	49,9	61,9	15	11
Октябрьски	49,1	48,6	16	23
Комсомольски	48,8	50,8	17	21
Советски	48,0	52,2	18	20
Çĕрпӳ	47,7	65,2	19	10
Куславкка	45,6	48,0	20	26
Красноармейски	44,7	56,9	21	16
Улатăр	44,4	62,6	22	11
Пăрачкав	43,3	50,3	23	22
Элĕк	41,4	46,1	24	27
Тăвай	39,3	58,7	25	13
Чкаловски	32,0	48,3	26	24
Шăмăршă	29,4	53,5	27	18
Кувакино	26,1	35,4	28	28

Асăрхаттарни: Комсомольски тата Кувакино районĕсем тăрăх даннăйсем февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнисемех юлаççĕ.

Республикăра 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне тракторсем юсамалли плана мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан СВОДКА

МТС-сем	Пуре юсана (процентпа)	Февраль уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Шăхасан	07,1	40,0
Красноармейски	100,0	—
Комсомольски	100,0	50,0
Йĕпреç	94,0	50,0
Шупашкар	92,3	—
Ишлей	86,5	30,7
Элĕк	72,7	44,4
Первомайски	72,0	60,0
Куславкка	71,7	30,0
Вăрнар	71,6	—
Сĕнтĕр	70,2	11,9
Елчĕк	65,5	—
Çĕмĕрле	65,3	16,6
Чкаловски	63,4	18,1
Канаш	62,2	—
Шăмăршă	61,1	—
Сĕнтĕрвăрри	60,0	—
Кувакино	59,6	33,3
Вăрмар	59,5	50,0
Етĕрне	58,9	—
Çĕрпӳ	57,6	—
Хĕрлĕ Чутай	52,1	25,0
Пăрачкав	46,5	73,3
Улатăр	46,4	—
Тăвай	45,0	—
Пĕтĕмпе	67,5	22,6
Февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	64,4	6,3

Ачча ялповĕнче йĕрке çук

—Ку лавкана паян та уçманçке, спичкăпа тăвар илмеллеччĕ, — тет лавка умне пырса тăнă пĕр ватă колхозник.

Пасарлă Аччари лавка эрнере икĕ хут уçă тăнине те курма çук. Яланах хупă. Вăл январь уйăхĕнче шăматкунтан шăматкуна çеç уçă тăнă. Вăл кунсенче ирĕксĕрех уçмалла, мĕншĕн тесен пасар кунĕ.

Аччари ялпо (председателĕ Н. Архиреева) потребитель обществин членĕсемпе ĕçлессине манăçа хăварнă. Икĕ çул ĕнтĕ вĕсемпе пĕр пуху та туса ирттермен, çĕнĕрен пĕр член та илмен. Çак ыйту пирки сăмах пуçарсан, Архиреева юлташ пĕр шухăшласа тăмасăрах:

—Халь пур япаласене те талонсемпе сутатпăр, çавăнпа та çĕнĕрен члена илес тĕлĕшпе ĕçлемерĕмĕр те, —тет вăл. Пыр та калаç ĕнтĕ. Ялпона килекен япаласене талонпа сутни члена илес ĕçе сӳнтерсе лартмаллине пĕлтерет-ши вăл?

Ялпо ялти служащисене вăхăтра çăкăр парса тăрассишĕн тăрăшмасть. Хăшпĕр служащисем иртнĕ çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенчи картăчкăсемпе те çăкăр илеймен. Çăнăхăн та памаççĕ. Катекри кирпĕч заводĕнче 23 рабочи январь уйăхĕшĕн çăкăр илмен.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче ялпо государствăна тырă сутнă çынсем валли тĕрлĕрен япаласем илсе пынă. Мĕнле сутнă-ха вĕсем çав япаласене? Катекри Киров ячĕпе тăракан колхозра ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ Казакова пулнă. Вăл колхоза çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшма пынă. Анчах та вăл кирлĕ ĕç тăвас вырăнне вăхăта ĕçкĕре ирттернĕ. Государствăна тырă сутнă çынсем валли килнĕ япаласенчен вăл 11 метр ситец, 2 килограмм конфет, супăнь тата ытти япаласем те илнĕ.

Январь уйăхĕн пуçламĕшĕнче ялпо государствăна тырă сутнă çынсене пама 200 литра яхăн эрех илсе пынă. Вăл эрехе виçĕ эрне иртсен те сутма тытăнман. Çав вăхăтрах Архиреева юлташ уйрăм çынсене ахаллех пара-пара янă. Тĕслĕхрен, январĕн 22-мĕшĕнче ялти актив валли тесе «Чăваш ЦИК» колхоз председательне 10 литр парса янă. Ун пек тĕслĕхсем татах та пур. Лавкара япаласене хăйĕн хакĕнчен ӳстерсе сутнă фактсем те пулнă. Сăмахран, 32 тенкĕ те 60 пус тăракан хĕрлĕ эрехе 80 тенке сутнă. Кун çинчен партин пуçламĕш организацинче те сӳтсе янă, анчах та нимĕнле конкретлă мерă та йышăнман. Ялпо ревизи комиссийĕ унти ĕçсене тĕрĕслесе тăмасть. Çавна пула та ĕнтĕ лавкана килекен япаласене вырăнсăр салатса пĕтереççĕ. Çулталăка яхăн пĕр хутчен те ревизи туман. Ялпо ĕçĕнче йĕркелĕх çукки ялпо членĕсене кӳрентерет.

Районри суту-илӳ пайĕ (заведующийĕ Николаев) Ачча ялпо ĕçĕнчи ирсĕрлĕхсене пĕлсе тăрать пулин те, нимĕнле мерă та йышăнма шутламасть. Суту-илӳ ĕçĕнче çирĕп йĕркелĕх пулмалла. Ниме пăхăнмасăр ĕçлекен работниксене кирлĕ пек ответ тыттармалла.

КАНАШ, (Хамăр корр.)

Ют çĕршывсенче

Италин ирĕке каларнă территорийĕнче çĕнĕрен Итали правительствин влаçне туса хуни

АЛЖИР, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри çарĕсен главнокомандующийĕ Вильсон генерал çапла каланă: февралĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа Аппенин çурутравĕн пĕтĕм территорийĕнче, Салерно, Потенца тата Бари провинцийĕсен çурçĕр енчи чиккисем таранах, çавăн пекех тата Сицилипе Сардини утравĕсем çинче çĕнĕрен Итали правительствин влаçĕ пулса тăрать. Çав территорире правительство влаçĕ пĕтĕмпех Итали правительстви аллинче пулать, анчах та çакă союзлă нацисен перемири условийĕсем тăрăх илнĕ прависене пăсмалла мар; çав правăсемпе союзлă нацисен ячĕпе главнокомандующи тата унăн представителĕсем, çав шутра Контроль комиссийĕ те усă курнă.

Вильсон çапла каланă: çак мероприятие виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ йышăннă декларацин принципĕсем тăрăх тата Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен Консультаци совечĕ сĕннисем тăрăх тунă.

Вильсон тата çапла каланă: союзниксен çар влаçĕсем вăрçă ĕçĕсем пыракан районсенче ĕçлесе тăраççĕ, тенĕ.

АНГЛИПЕ ФРАНЦИЯ ФИНАНС ТĔЛĔШПЕ ТАТА ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН КИЛĔШӲСЕМ ТУНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин финанс министрĕ Андерсон паян общинăсен палатинче çапла каланă: Англи правительстви Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетпа финанс тĕлĕшпе тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен килĕшӳсем тунă, тенĕ. Андерсон çав килĕшĕве вăрçă вăхăтĕнче тунине палăртнă, анчах та çав килĕшӳ малашнехи сыхăнусемшĕн те лайăх услови пулса тăрĕ, тесе шанса каланă вăл. Çав килĕшӳ Англипе Франция 1939 çулта тунă килĕшӳ пек, 200 франк, фунт-стерлинг хакне тăмалла туса хунă.

Пĕр-пĕрине пулăшасси çинчен калакан килĕшӳре çапла каланă: килĕшсе таталакан енсем вăрçăра пĕр-пĕрне мĕн май килнĕ таран пулăшмалла, — тенĕ.

ВИШИ «ПРАВИТЕЛЬСТВИ» ФРАНЦУЗ ПАРТИЗАНĔСЕМ АКТИВЛĂН КĔРЕШНИНЧЕН ХĂРАСА ӲКНĔ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лавалĕн «пропаганда министрĕ» Филипп Анрио радио тăрăх сăмах тухса каланă. Француз патриочĕсем кĕрешни вăйланса пынинчен хăрани çав сăмахран уççăн курăнса тăрать. Анрио çапла каланă: французсен уйрăм ушкăнĕсем пур çĕрте те кĕрешеççĕ, электростанцисене, заводсене, кĕперсене сирпĕнтерсе-сирпĕнтерсе яраççĕ. Анрио каланă тăрăх, çав ушкăнсем Германи валли ĕçлесе тăракан мĕнпур предприятисене ĕçлеме чарма тăрăшаççĕ. Вĕсем сăтăр тунă пирки нумай заводсем чарăнса ларнă ĕнтĕ, чи кирлĕ чугун çулсем тăрăх поездсем çӳреме пăрахнă. Патриотсем «Францин мĕнпур районĕсенче, уйрăмах та хĕвелтухăçĕнчипе çурçĕрти промышленноçлă районсенче, хăюллăн та активлăн кĕрешеççĕ», тенĕ Анрио.

Швеци дипломачĕ Финляндин ют çĕрсене туртса илмелли планĕсем çинчен çырнă кĕнеке

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Нумаях пулмасть кунта Эйнар Вирсенăн «Финляндин пуласлăхĕ» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă. Çав кĕнекен авторĕ Германире тата ытти çĕршывсенче Швеци посланникĕ пулса ĕçленĕ. Вăл финн реакционерĕсем ют çĕрсене туртса илме шутлани çинчен çапла çырать: «Хальхи финн литературинче Хĕвелтухăç Карели çинчен çырни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав литературăра хăшпĕр господасем Финляндин хăйĕн çĕрне кирек мĕн пулсан та аслăлатмалла тенĕ вырăнсем тупма пулать.

Çав кĕнекен авторĕ нимĕçсемпе финсем Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлама мĕнле хатĕрленни çинчен каласа парать. Вăл каланă тăрăх, Совет Союзне тапăнинччен нумай малтан Швеци урлă çарсем турттарнă. Нимĕç салтакĕсем Финляндире майĕпен капланса пынă, аэродромсем, укрепленисем, çар склачĕсем тунă. 1941 çулхи май уйăхĕнче Финляндире запасри çынсене мобилизациленĕ, Финляндири пысăк центрсенчен халăхпа пурлăха ытти çĕре куçарма хатĕрленĕ. Разведка тăвакан самолетсем, Финляндин территорийĕнчен вĕçсе тухса, вырăссен чикки урлă каçа-каçа кайнă. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Германия Совет Союзне тапăннă кун, Финляндия хăй вăрçа хутшăнни çинчен пĕлтернĕ. Çав кунах нимĕç бомбардировщикĕсем, финсен территорийĕнчен вĕçсе тухса, Кронштадт çине бомбăсем пăрахнă, июнĕн 24-мĕшĕнче вара финсемпе нимĕçсен пĕрлешнĕ çарĕсем Совет Союзĕн чикки урлă каçса кайнă.

«Финляндия ку вăрçа хăй ирĕкĕпе хутшăннă, теме пулать»,—тет автор.

Финсем «эпир хамăр уйрăм вăрçатпăр» тесе калани çинчен Эйнар Вирсен çапла çырать:

«Çапла калани питĕ тĕлĕнтерет. Ăна йышăнма пулĕ-ши вара..? Паллă финсем тухса каланисем тата Финляндин вăрçă ĕçĕсем Финлянди вăрçи Германи вăрçипе таччăн сыхăнса тăнине кăтартса параççĕ».

Эйнар Вирсен кĕнеки пичетленсе тухсанах ăна сутма чарнă, ăна Финляндин Стокгольмри миссийĕ хĕстернипе сутма чарнă пулмалла.

ТУРЦИРЕ ÇĔР ЧĔТРЕНИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

АНКАРА, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Турцире çĕр чĕтренĕ пирки февралĕн 9-мĕшĕ тĕлне 2.381 çын вилнĕ, 1.583 çын аманнă. 8.000 çурт ишĕлнĕ. Çĕр чĕтренĕ пирки сиен курнă районсене Турцин шалти ĕçсен министрĕ Хильми Уран тухса кайнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш çар чаçĕсем Касино хулин урамĕсенче çаплах хаяррăн çапăçаççĕ. Тăшман калама çук вăйлă хирĕç тăрать. Америкăн 5-мĕш çар тĕп фронтĕнчи ытти вырăнсенче тăшман контратакăсем тунă. Çав контратакăсене сирсе янă. Анцио патĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Англин 8-мĕш çар фронтĕнче çанталăк начар тăнă пирки патрульсем çеç çапăçнă.

Авиаци тăшманăн çар объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш çар чаçĕсем Кассинора каллех малалла куçнă. Унта тăшман питĕ вăйлă хирĕç тăрать. Америкăн 5-мĕш çар тĕп фронтĕнчи пĕр вырăнта тăшманăн питĕ вăйлă контратакине сирсе янă. Анцио районĕнче тăшман союзниксен çарĕсен позицийĕсене çапăçса пĕлме тăрăшнă.

Союзниксен авиацийĕ пĕр çĕре пухăнса тăнă çарсене тата тĕрлĕ объектсене атакăланă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри авиацийĕ 850 вĕçев яхăн тунă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем пур фронтсенче те тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ. Çав çарăн 2-мĕш дивизийĕн чаçĕсем Иванец районĕнче гитлеровецсен тата болгарсен оккупациллĕ çарĕсемпе, Недичăн тата Михайловичн четникĕсен отрячĕсемпе 20 кун хушши çапăçнă. Çав çапăçусенче тăшманăнне 220 çын вĕлернĕ, 290 çын амантнă, 80 çынна тыткăна илнĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Гитлер оккупанчĕсемпе тата четникĕсемпе Гацко таврашĕнче çапăçнă вăхăтра халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн боецĕсем çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ тата Михайловичăн Герцеговинăри помощникĕн Перишичăн архивне тытса илнĕ. Çав архиври документсем оккупантсемпе Михайлович четникĕсем пĕр-пĕрипе таччăн сыхăнса ĕçленине кăтартса параççĕ.

ЖЕНЕВА, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ хыпарсем тăрăх, гитлеровецсен оккупаци çарĕсем Словенире, тинĕс хĕрринче наступлени пуçласа янă. Кочевье районĕнче те çапăçусем пыраççĕ. Унта гитлеровецсем Горски Котор тата Сушак еннелле каякан çулсене туртса илме хăтланаççĕ. Ликра вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Берлинпа Франкфурт хулисене тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: февралĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух, çĕрле Англи авиацийĕ Берлинри тĕрлĕ объектсене атакăланă.

Союзниксен бомбардировка тăвакан тата истребительнăй авиацийĕ тăшманăн Эгей тинĕсĕнчи суднисемпе гаванĕсене вĕçе-вĕçе пырса тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Европăри сывлăш çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксен соединенийĕсем Франкфурта тапăннă.

«Либерейтор» йышши самолетсем Германин Па-де-Кале районĕнчи çар сооруженийĕсене атакăланă.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Юлашки вăхăтра Заготзернон Тĕрлемесри хатĕрлев пунктĕнче государство тыррине салатакансен ушкăнне тытнă. Çав ушкăн законсăр салатмашкăн хăйне уйрăм фонд тунă, унта 6 тонна ытла тырă пулнă.. Çав шутран 3 тонна ытла тĕрлĕ çынсемпе организацисене документсăр-мĕнсĕрех салатнă. Хатĕрлев пункчĕн директорĕ Фирсов, склад заведующийĕсем Биктимиров, Петров, Сергеев тата пекарня заведующийĕ Белов хăйсем хушшинче 2 тонна çăнăх салатнă. Хăйсен преступленийĕсене пытарас тесе, вĕсем хатĕрлев пункчĕн учетпа отчетноçне юри пăтраштарса янă.

Çак ĕçпе 1932 çулхи августăн 7-мĕшĕнчи закон тăрăх тата уголовнăй Кодексăн статьисем тăрăх 14 çынна Уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ, вĕсенчен Фирсова, Биктимирова, Белова, Петрова, Сергеева, Ахматуллина тата Спиридонова арестленĕ.

Çак ĕçе пăхса тухма Чăваш АССР-ĕн Верховный Судне янă.

Леонид Агаков

Лăпкă çын

(КАЛАВ)*

Ирхине наступлени пуçланмалла пулнă...

Çав саманта кашниех кĕтрĕ, кашниех хатĕрленчĕ. Икĕ уйăх ытла оборонăра пулни пурне те вăраха ямасăр, часрах малалла—хĕвеланăçнелле, нимĕçсен тимĕрленĕ атти айĕнче тунсăхласа выртакан тăван çĕре хăвăртрах чуралăх намăсĕнчен хăтарас кăмăл çĕклентсе вĕрерĕ.

Тĕттĕмленес умĕн, кăштах саралма пуçланă хурăнлăх çине сывлăм ӳкнĕ чух, виççĕмĕш батальона полковник тата генерал-дивизи командирĕ пычĕç. Вĕсем батальон е рота наступление пĕтĕмĕшпе епле хатĕрленнине çеç мар, уйрăм боецсем мĕн тери хатĕр пулнине те тĕрĕслесе тухрĕç.

— Аван,—терĕ юлашкинчен кăвак уссиллĕ генерал,—ку халăх çине çирĕппĕнех шанма пулать.—Кусем ним умĕнче те чарăнса тăрас çук, такама та, теме те çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Ăнăçлăх сунатăп!

Вăл батальон командирĕн—çирĕм çулхи капитанăн аллине тытса чăмăртарĕ.

— Ыран тĕл пулăпăр-ха! Ятлаçма тӳр килмĕ, тетĕп. Ку ĕнтĕ сирĕнтен хăвăртан килет... Эсир епле çапăçма пултарнинчен!

— Паллах, — терĕ комбат.—Ку таранччен питех ятламанччĕ те-ха пире, мĕн пулĕ...

— Ну, ну, асту. Шанатăп.

Генералпа полковник машина çине ларса тепĕр батальон еннелле кайсан, çамрăк комбат пур боецсене те канма хушса хăйĕн землянкине таврăнчĕ те, амăшĕ патне кĕске кăна çыру çырас, тесе ларчĕ.

— Хаклă аннеçĕм!—тесе çырчĕ вăл.—Темиçе сехетрен эпĕ хамăн боецсене тăшман позицийĕсене штурмлама илсе каятăп. Яланхи пекех, çак самантра манăн шухăшсем сан патна çаврăнса тухаççĕ. Пилле мана, аннеçĕм...

Анчах малалла çырма май килмерĕ—шăпах çак самантра землянкăна пĕрмай юбозра çӳренĕ рядовой Иван Куракин кĕрсе тăчĕ.

— Каçарăр чăрмантарнăшăн,—терĕ вăл,—эпĕ сирĕн пата васкавлă ĕçпе килтĕм...

— Мĕн пулчĕ.

— Нимĕн те пулман та... Ыйту пур манăн:

— Кала эппин.

— Эпĕ хама ротăна куçарма ыйтасшăн...

— Епле вăл... ротăна?—тĕлĕнерех пăхрĕ ун çине комбат:

— Çаплах. Хуть те хăш ротăна куçарăр.

— Мĕншĕн апла?

— Мĕншĕн тесен, текех юбозра лармa пултараймастăп. Ахаль те, госпиталь хыççăн çичĕ уйăх лашасемпе тăрмашса пурăнтăм ĕнтĕ, çитет. Малти линие каяс тетĕп халь.

— Пирĕн сансăр та çын çитет, Иван Васильич...

— Çитет пулсан та, ытлашши пулмасть: Тархасшăн ярăр, пĕтĕм чĕререн ыйтатăп.

Комбат, аллинчи карандаша аяккалла хурса, хăй умĕнче пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа тăракан боеца тинкерсе пăхрĕ.

Иван Куракин батальонра чи хисеплĕ çынсенчен пĕри, ăна ĕнтĕ пурте хăнăхса çитнĕ, юратнă. Хĕрĕхрен иртнĕскер, вăрçăччен Дон тăрăхĕнчи пĕр пуян колхозра конюх пулса пурăннăскер, вăл батальон хуçалăхĕнче калама çук тăрăшса ĕçленĕ. Пĕр минут та ĕççĕр ларман. Хăйĕн ездовой службине пуринчен те авантарах туса пынисĕр пуçне, вăл урапасем юсанă, хăмăт-ĕнерчĕксене тӳрлетнĕ, вĕренсем явнă, лашасене те хăех таканланă, камăн та пулсан атă-пушмак çĕтĕлсен—ăна та сапланă. Тем тума та пĕлнĕ вăл. Çитменнине нихăçан та кам та пулин — взвод командирĕ е старшина—ĕç хушасса кĕтмен, ĕçне хăех тупнă. Кăмăлĕ вара унăн тĕлĕнмелле лăпкă пулнă, нихçан никампа харкашман, кутăнланма вуçех те пĕлмен. Çавăнпа та пуринчен те ытларах хисепленĕ ăна. Хăй пек рядовойсем çеç мар, аслăрах командирсем те вара ăна ялан е «алте», е ялпа — «Иван Васильич» тесе чĕннĕ. Иртнĕ хĕлти çапăçусенче аманнă хыççăн, куçĕсем те ытла витĕрех курман та унăн, ăна стрелок туса малти линине ярасси çинчен никам та шутламан.

— Куракин пирĕн пĕтĕм хуçалăха тытса тăрать, никама та памастпăр вăл боеца,—тенĕ ун пирки сăмах тапратсан. Çавăнпах комбат халь те ăна çапăçăва ярасшăн пулмарĕ.

— Епле сасартăк кун пек шухăш тытрăн вара эсĕ?—Куракина çаплах куçĕнчен пăхса ыйтрĕ комбат.

— Тытрăм çав...

— Ямастăп эпĕ сана ротăна, эсĕ хăвăн вырăнунта та питĕ кирлĕ çын. Сан вырăнна кама тăратас-ха манăн? Маларах пулнă пулсан, татахчĕ... Атту вĕт темиçе сехетрен çапăçу пуçланать, пурте вырăнта.

— Тархасласа ыйтатăп, юлташ капитан...

— Ан та ыйт. Татăклăн каларăм сана.

— Пĕр çапăçăва яр хуть. Кайран каллех хам вырăна таврăнăп!

Комбат пирус тивертсе ячĕ те кăштах шухăша кайрĕ. Унтан, Куракин пĕтĕм чĕре хавалĕпе ыйтнине, хăйĕн кăмăлне тултаракан ответ илмесĕр ним тусан та тухса каяс çуккине курса—килĕшрĕ.

— Юрĕ эппин, Иван Васильевич. Пĕр çапăçăва кĕрсе тух. Анчах асту, кайран, каллех снабжени взводне каятăн!

— Пысăк тав, юлташ капитан. Хăш ротăна?

— Иккĕмĕшне, Яблоков лейтенант патне.

— Есть!

Иван Куракин, чăн-чăн строевик пекех, вăшт çаврăнса тухса кайрĕ. Капитан пăçăр пăрахнă карандаша каллех алла тытса, çырăва малалла çырма пикенчĕ. — Пĕлсех тăратăп, пĕтĕм чĕрепе туятăп, çак çапăçура тискер тăшман темле хирĕç тăрсан та, çĕнтерессе пурĕпĕрех эпир çĕнтеретпĕр,—çырчĕ вăл.—мĕншĕн тесен...

Шухăшсем çурхи шыв юххи пек капланса киле пуçларĕç. Капитанăн çак минутсенче инçетри хулари пĕр пĕччен пурăнакан ватă амăшне пурин çинчен те пĕлтерес килчĕ: боецсем çапăçу пуçланасса çав тери хавасланса кĕтнине те, лăпкă обозник Иван Куракин хăйне малти линие яма ыйтса тархасланине те, генерал унăн батальонне мухтанине те, пĕтĕмпех, пĕтĕмпех... Анчах темшĕн алли çырмарĕ унăн. Чĕри хыттăн тапса тăчĕ. Кĕтмен çĕртенех чĕлхе вĕçне техникумра чухне вĕреннĕ Пушкин сăввин сыпăкĕ пырса тухрĕ:

—Страшись, о рать иноплеменных!
Росcии двинулись сыны;
Восстал и стар и млад, летят на дерзновенных,
Сердца их мщеньем зажжены.
Вострепещи, тиран! Уж близок час паденья!
Ты в каждом ратнике узришь богатыря...

Сасартăк телефон чăнкăртатрĕ. Комбата халех полк командирĕ патне пыма хушрĕç.

Çырăва çырса пĕтересси пулмарĕ, амăшне каласа парас тенĕ туйăмсем капитанăн чĕринчех юлчĕç.

(Малалли пулать)

*) «Çапăçу хирĕнче» ятлă çĕнĕ калавсен кĕнекинчен.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ГПТ 00034 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.